28-мĕш çул тухать. Ханĕ 20 пур.

1945
ИЮЛЬ
4
ЮПКУН
118 (6879) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе
Шупашкар хула комитечĕн,
ЧАССР Верховный Совечĕн
тата Шупашкар хула
Совечĕн хаçачĕ

Ĕçсынни депутачĕсем районсовечĕсем исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлă тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстернĕшĕн мăлта пыракан çак колхозсемпе колхозниксене республикăри ХИСЕП ХĂМИ сине нĕртнĕ:

ОКТЯБРЬСКИ РАЙОН ТĂРĂХ:

57. **Молотов** ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ **Савельев** юлташ, ферма заведующийĕ **Кудряшов** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 109 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 115 процент, сыснасем енĕпе 120 процент, сурăхсем енĕпе 148 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 133 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай парса татнă.

58. **Тельман** ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ **П. С. Васильев** юлташ, ферма заведующийĕ **М. Д. Глухова** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 108 процент, сыснасем енĕпе 100 процент, сурăхсем енĕпе 250 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 125 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн 120 процент аш-какай парса татнă.

59. «**Тойдаш**» колхоз (председателĕ **Г. К. Кузьмин** юлташ, ферма заведующийĕ **М. И. Алексеев** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 101 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 120 процент, сыснасем енĕпе 122 процент, сурăхсем енĕпе 123 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 100 процент тултарнă. Çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăварнă. Государствăна çулталăкшăн 95 процент аш-какай панă.

60. Урхас Кушкă ял Советĕнчи «**Заря**» колхоз (председателĕ **Я. Т. Тихонов** юлташ, ферма заведующийĕ **К. Е. Евдокимов** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 107 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 110 процент, сыснасем енĕпе 216 процент, сурăхсем енĕпе 125 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 103 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн 130 процент аш-какай парса татнă.

61. «**Аниш**» колхоз (председателĕ **М. П. Павлов** юлташ, ферма заведующийĕ **П. М. Митрофанов** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 104 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 100 процент, сыснасем енĕпе 188 процент, сурăхсем енĕпе 173 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 183 процент тултарнă.

62. «**Комбинат**» колхоз (председателĕ **В. И. Иванов** юлташ, ферма заведующийĕ **И. И. Иванов** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 111 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 100 процент, сыснасем енĕпе 146 процент, сурăхсем енĕпе 138 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 132 процент тултарнă.

63. «**Комбайн**» колхоз (председателĕ **П. К. Кузьмин** юлташ, ферма заведующийĕ **Г. М. Шалфеев** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултăра выльăх енĕпе 110 процент, сыснасем енĕпе 191 процент, сурăхсем енĕпе 174 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 142 процент тултарнă. Государствăна çулталăкшăн аш-какай 100 процент, çамарта 52 процент панă.

64. **Буденный** ячĕпе тăракан колхозри сурăх пăхакарн **В. Семенова** юлташ 50 сурăхран 65 путек илсе пурне те сыхласа хăварнă.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патĕнче Китай республикин Ĕç тăвакан Юань Председателĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Сун Цзы-вень господин ячĕпе пулса иртнĕ ирхи апатлану

Июлĕн 2-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патĕнче Китай республикин Ĕç тăвакан Юань Председателĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Сун Цзы-вень господин ячĕпе ирхи апатлану пулса иртнĕ.

Апатланура çаксем пулнă: Сун Цзы-вень господин, ют çĕршыв ĕçĕсен Вице-министрĕ Ху Ши-цзэ господин, Китай республикин Совет Союзĕнчи Посолĕ Фу Бин-чан господин, Шень Хун-ле, Цянь Чан-чжао, Цзян Цзин-го, Пу Дао-мин, Лю Цзе-жун господинсем.

Советсем енчен çаксем пулнă: СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата Тулашри Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ А. И. Микоян, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем А. Я. Вышинскипе С. А. Лозовский, Тулашри Суту-илӳ Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Ю. М. Каганович, Совет Союзĕн Китайри Посолĕ А. А. Петров, Наркомвнешторгăн Хĕвелтухăç Управленийĕн Начальникĕ М. И. Сладковский, СССР Наркоминделĕн 1-мĕш Инçетри Хĕвелтухăç отделĕн Заведующийĕ Г. И. Тункин, СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн Заведующийĕ Ф. Ф. Молочков, СССР Наркоминделĕн Пичет отделĕн Заведующийĕ К. Е. Зинченко тата ытти сем те.

Апатлану туслăн пулса иртнĕ.

СССР Наука академийĕн президентне В. Л. Комарова „Ленинграда хӳтĕленĕшĕн" ятлă медаль панă

Ленинградра СССР Наука академийĕн президентне В. Л. Комарова «Ленинграда хӳтĕленĕшĕн» ятлă медаль парасси çинчен пулса иртнĕ.

Комаров академик хăйне награда панăшăн хĕрӳлĕн тав туни.

— Хамăран чи пысăк культурăлă центрти—Ленинградри совет наукине наука учрежденийĕсене малалла эталантарассишĕн эпĕ малашне те мĕн кирлине пĕтĕмпех туса пыма пулатăп,—тенĕ вăл.

РСФСР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи пуçламăш тата вăтам шкулсем учителĕсене РСФСР шкулĕнчи тава тивĕçлĕ учителĕн хисеплĕ ятне парасси çинчен

Халăха çутта кăларас тĕлĕшпи каламăç çук паха, тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн.

РСФСР шкулĕнчи тава тивĕçлĕ учителĕн хисеплĕ ятне çаксене парас:

1. Елизавета Павловна **Александровăна** — Шупашкар хулинчи 1-мĕш номерлĕ шкулăн учительницине.

2. Александр Васильевич **Васильсова**— Сĕнтĕр районĕнчи Йӳçкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительне.

3. Константин Васильевич **Волкова** — Комсомольски районри Лудкири пуçламăш шкулĕн учительне.

4. Мария Ивановна **Галкинăна** — Улатăр хулинчи 7-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн учительницине.

5. Георгий Григорьевич **Григорьева** — Муркаш районĕнчи Йӳçкассинчи вăтам шкулăн учительне.

6. Ирина Петровна **Ермошкинăна** — Канаш хулинчи 2-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн учительницине.

7. Гавриил Алексеевич **Кереньков** — Куславкка районĕнчи Тĕрлемесри вăтам шкулăн учительне.

8. Никандр Николаевич **Максимова** — Канаш районĕнчи Пасарлă Аччари çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительне.

9. Ираида Семеновна **Павловăна** — Çĕмĕрле районĕнчи Мăн Улхашри вăтам шкулăн учительницине.

10. Валентина Дмитриевна **Распопăвăна** — Улатăр хулинчи 7-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн учительницине.

11. Клавдия Ивановна **Тетеринăна** — Муркаш районĕнчи Ярапайкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулăн учительницине.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ П. БАХМУРОВ.

Мускав, 1945 çулхи июлĕн 29-мĕшĕ.

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

Орденлă колхозра

Елчĕк районĕнчи «Ново-Ишеряково» колхоз 1936—38 çулсенче пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕшĕн, выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне ӳстернĕшĕн Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ илме тивĕç пулчĕ.

Колхоз председателĕ Я. Егоров юлташ (Отечественнăй аслă вăрçăн инваличĕ) ĕçе пĕлсе организацилеппине пула вăрçă вăхăтĕнче те, уйрăмăнах 1943—44 çулсенче пысăк çитĕнӳсем тунă. Иртнĕ çул государство умĕнчи пур тĕрлĕ обязательствăсене те парса татнă хыççăн, Хĕрлĕ Çар фондне 600 пăт тĕпитырă панă. Колхозри фондсене пурне те вăхăтра тата çителĕклĕ хывнă. Колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх 2,1 килограмм тырă, 0,5 килограмм пахчаçимĕç, 50 пус укçа валеçнĕ.

Колхоз вăрçăн йывăр çулĕсенче те вăйлă тырпул туса илнĕ. Колхозра ĕç дисциплинини лайăх, ĕçе тухман е ĕçкунĕсен минимумне тултарман пĕр колхозник та çук.

«Ново-Ишеряково» колхоз кăçалхи çуракине вăхăтра тата лайăх пахалăхпа 7 кун хушшинче пĕтерчĕ. Агротехникăна пăхăнса пĕтĕм çĕр лаптăкне машинăпа ретĕн-ретĕн акнă, уйрăм сельцинăпа ĕçленĕ. Ĕç нормине тултарайман пĕр çын та нулман.

Çуртсурри калчисем пĕр тикĕс шăтса лайăх çитĕнеççĕ. Вĕсене çумкурăкĕнчен тасатсах тăраççĕ. Çуракине вĕçленĕ хыççăн çĕртме сухи тума тытăннă. Ку ĕçе июнь уйăхĕн малтанхи кунĕсенчех ăнăçлăн вĕçленĕ. Халĕ колхозра пикенсех тырпул пухса кĕртме хатĕрленеççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче те «Ново-Ишеряково» колхозра выльăх шучĕ чакман, çулран-çулах ӳссе пынă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ĕнесем енĕпе 147 процент, сурăхсем енĕпе 135 процент, сыснасем енĕпе плана виçĕ хут ытла тултарнă.

Фермăсен заведующийĕ О. Капирина юлташ хăйĕн ĕçне юратса тăвать. Ĕне пăхакан А. Воробьева юлташ хăй çумне çирĕплетнĕ кашни ĕнерен пĕрер пăру илнĕ.

Колхоз государствăна обязательство тăрăх выльăх-чĕрлĕх продукцине вăхăтра парса пырать. Сĕт-çу, аш-какай, çамарта памалли çур çулти плана нумай иртерсе тултарнă.

Халĕ колхозра выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене юсаççĕ. Лаша витине тĕпренех юсаççĕ, ферма работникĕсем валли çĕнĕ пӳрт тăваççĕ.

Кашни колхозник тата колхозница гектартан 100 пăт тырă туса илессишĕн, обществăлă выльăх-чĕрлĕх шутне тата унăн тухăçлăхне ӳстерессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

А. ЧЕРНОВ.

Мăлтисен ретне тухнă колхоз

Шăмăршă районĕнчи «Победа» колхоз иртнĕ çулсенче юлса пыракăн колхозсенчен пĕри пулнă. Яхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тăвайман пирки тырă тухăçлăхĕ те начар пулнă.

Колхоз председателĕ пулса ĕçлеме Г. Концов юлташа суйласан, ĕç пачах урăхланнă. Концов юлташ пысăк опытлă, колхоз ĕçне организацилеме пĕлекен çын. Вăл хăй тавра колхозри актива пĕтĕстерме, колхоз ĕçне ертсе пыракан бригадирсене суйласа илме пĕлнĕ. Яхуçалăх ĕçне вăтă колхозниксемпе канашласа тунă, ĕçе вăхăтра туни тырă тухăçлăхне ӳстерес ĕçре мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине пухура та уйрăмăн та кашни колхозникăх тĕплĕн ăнлантарса панă. Çапла ĕçлени колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетме май панă.

Кăçал колхоз çуракине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа иртеррĕ. 319 гектар вырăнне 326 гектар акса хăварнă. Унсăр пуçне, юлса пыракан кӳршĕри «Красная звезда» колхоза пулăшса 22 гектар акса панă. Çапла лайăх ĕçленĕшĕн «Победа» колхоза Хисеп Хăми сине кĕртнĕ. Çурхи тырă калчисем пурте пĕр харăс тата пĕр тикĕс шăтса тухнă, колхозниксемпе колхозницăсем вĕсене çумкурăкĕнчен тасатсах тăраççĕ. Кĕрхи тата çурхи тырăсем лайăх çитĕнеççĕ.

Халĕ колхозниксемпе колхозницăсем пикенсех çĕртме тăваççĕ. Çĕртме пуссине пурĕ 5500 лав тислĕк кăтарнă. Тырпул пухса кĕме те тивĕçлипех хатĕрленеççĕ. Çуракинче мала тухнă колхозри колхозниксемпе колхозницăсем тырпул пухса кĕрес ĕçре те çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

(Хамăр корр.).

Вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ

ВĂРНАР. **(Хамăр корр.).** Районри малта пыракан колхозсем тырпула лайăх пăхса çитĕнтерес тесе, хĕрсех çум çумласçĕ, ретсем хушшине кăкалатаççĕ. Акă Ленин орденлĕ Сталин ячĕлле тăракан колхозра çум çумлама кулленех 150 çын таран ĕçе тухать. Çавăн пекех тырпула çум курăкĕнчен тасатас ĕç «11 лет Чувашии», «Волга», «Советская деревня», «Гигант», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче ăнăçлă пырать. «Самолет», «Первое мая», Киров ячĕпе тăракан колхозсенче çĕрулми пуссисене сӳреleççĕ.

Муркаш районĕнчи Шмидт ячĕпе тăракан колхоз тырпул пухса кĕртме пур енчен те аван хатĕрленет. Яхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсаса пĕтернĕ. Паянхи куна колхоз 2 жнейка, 40 кĕреплелĕ çава, 60 çурла юсаса хунă, 20 лаша валли 25 урапа пур, михĕсемпе шăналăксем çителĕклĕ. Тырă хуманли 11 склада юсанă.

Кунта тырпулсене пăхса çитĕнтерес ĕçе те аван организациленĕ. 30 гектар çинчи хлевера, 18 гектар çинчи сĕлле çумкурăкĕнчи тасатнă.

Ф. МАЛЫШКИН.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ ИЮЛĔН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ ÇĔРТЖЕ ТĂВАС ТАТА ÇУМ ÇУМЛАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА
(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Çĕртме тунă	Çум çумланă
Вăрнар	100,6	60,5
Сĕнтĕр	95,0	57,7
Сĕнтĕрвăрри	92,0	32,6
Ишлей	92,7	58,9
Çĕрпӳ	91,6	70,9
Шăхасан	91,2	56,0
Октябрьски	90,2	47,8
Шупашкар	89,7	32,9
Куславкка	87,1	62,2
Етĕрне	86,6	77,6
Красноармейски	86,1	41,5
Канаш	81,1	82,8
Советски	79,5	33,5
Вăрмар	78,5	40,9
Элĕк	76,7	43,6
Муркаш	76,2	17,1
Калинино	71,0	31,9
Елчĕк*)	70,1	64,6
Çĕмĕрле	56,8	26,0
Хĕрлĕ Чутай*)	55,3	42,9
Первомайски	53,5	67,2
Комсомольски	50,0	95,2
Чурачăк*)	48,6	9,2
Чкаловски	46,7	66,1
Тăвай	42,7	71,2
Шăмăршă	41,2	75,9
Улатăр	37,0	55,2
Пăрачкав	33,5	42,9
Кĕпреç*)	32,7	13,2
Кувакино*)	16,3	49,4

*) Июнĕн 25-мĕшĕ тĕлпе илнĕ даннăйсем.

Тырăсем çум айне пулнă

Красноармейски районри Киров ячĕпе тăракан колхоз кашни çулах начар тухăçлă тырпул туса илнĕ. Халĕ районра çĕртме тăвас тата çум çумлас ĕç хĕрсех пырать. Анчах та Киров ячĕпе тăракан колхозра вара нимĕн те тумаççĕ.

Колхозра тырпул пухса кĕме пачах хатĕрленмеççĕ. Пĕртен пĕр жнейкăна юсама та тытăнман. Кĕреплелĕ çавасем те хатĕр мар. Киров ячĕпе тăракан колхозăн 150 гектар çĕртме тумалла, анчах халĕ пурĕ те 50 гектара яхăн кăна тунă. Колхоз председателĕ Герасимов юлташ: халех çĕртме тусан кĕтӳ сӳреме вырăн çук, çавăнпа кăçах юлса çĕртме тума шутлатпăр, тет. Колхоз 251 гектар тырă, 32 гектар çĕрулми çумламалла. Тырра çумкурăкĕ пусса илнĕ, анчах Герасимов çум çумлас ĕçе организацилес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

Тăрăшса ĕçлекен семье

Ишлей районĕнчи «Новая жизнь» колхозра Ф. Краснова юлташ 8 çул ытла конюхра ĕçлет.

— Манăн атте колхоз лашисене питĕ юрататтĕ. Атте вилчĕ. Эпĕ ун вырăнне ĕçлеме кĕтĕм, атте пекех лашасене юратса пăхма сăмах патăм,—тет Краснова юлташ.

Чăн та, Краснова, хăйĕн сăмахне тӳрре кăларма тăрăшать. Вăл пăхакан лашасем мăнтăр, таса.

Краснова юлташа лайăх ĕçленĕшĕн кашни çулах ĕçкунĕ çумне хушса тӳлеççĕ. Çак хушса тӳленĕ тырăпа вăл 1942 çулта сехет, 1943 çулта велосипед, 1944 çулта çĕвĕ машини илчĕ.

Фекла Краснова конюхăн амăшĕ Елизавета Краснова колхозра 12 çул хушши тырă акакан пулса ĕçлет. Ăна лайăх ĕçленĕшĕн колхоз премби шучĕпе каннăлли сурта ячĕ.

У[illegible]ОВ.

Совет Союзĕн Генералиссимусĕ аслă Сталин пире çĕнтерӳ тума хавхалантарса пычĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июлĕн 2-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталин юлташа «Çĕнтерӳ» орденĕ парса наградăланине, ун аслă çар званийĕ Совет Союзĕн Генералиссимусĕ ятне тата Совет Союзĕн Геройĕн ятне панине чысласа районри колхозсенче, предприятисемпе учрежденисенче савăнăçлă митингсем пуласа иртеççĕ.

Çак кунсенче митинг Ямайкасси ялсоветĕнчи «Стахановец» тата «Красная звезда» колхозсенче пулса иртрĕ. Митинг пулать тенине илтсенех, колхозниксем клуба пухăнчĕç. Кашниех агитатор сăмах каласса кĕтсе тăрать.

— Отечественнăй вăрçăн чи йывăр кунĕсенче те аслă Сталин хăйĕн гениллĕ âстăнĕпе эпир вăрçăра çĕнтерессине ĕненнерсе пире ĕçре хавхалантарса пычĕ,—терĕ ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ Петров юлташ митинга уçса.

Колхоз председателĕ Никитин юлташ хăйĕн пурне те хумхантаракан сăмахĕнче çапла каларĕ:

— Эпир Сталин юлташăн кашни сăмахне чĕрере тытса тăрса, çĕнтерӳшĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕмĕр. Эпир тăрăшса ĕçлени аханлă пулмарĕ, вăл историре нихăçан пулман чаплă çĕнтерӳ тума май пачĕ. Эпир малашне те вăй хурса ĕçлĕпĕр, хамăр колхоза районра малти вырăна кăларăпăр,—терĕ вăл.

Митингра çамрăксем кăна мар, ватă колхозниксем те нумайăшĕ тухса калаçрĕç. Вĕсем пурте çĕртме тăвас, çум çумласа тырпул пухса кĕртес тата утă çулма хатĕрленес ĕçсене республика юбилейĕ тĕлне пĕтĕмпех вĕçлесе çитерме обязательствăсем илчĕç.

С. ШАДИН.

Пристань коллективĕн уяв умĕнхи ĕçĕсем

Шупашкар пристанĕнче ĕçлекенсем Чăваш республики 25 çул тултарнине ĕçре çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Пристань коллективĕнче планпа пăхнă ĕçсене пурне те ăнăçлăн турĕ, тĕп ĕçсен планне иртерсе тултарчĕ. Сăмахран, таварсене пассажирсем турттармалли плана тоннаж енĕне икĕ хута яхăн, тоннокилометр енĕпе виçĕ хута яхăн иртерсе тултарнă.

Пристань коллективĕ çак çитĕнӳсене социализмлă ăмăртура тăрăнса ĕçленипе тата ĕçре пулнă чăрмавсене ăнăçлăн сирсе пынипе турĕ. Иртнĕ уйăхра пирĕн ĕçре клиентсенчен килекен пысăк чăрмавсем пулчĕç. Кунта эпир пĕрмаях чăрмав кӳрекен хăнчĕр клиентсене асăнса хăварасшăн. План тăрăх, Милютинри хăма çуракан заводăн 4000 тонна хăма, 2400 тонна шпал ăсатмалла пулнă. Заводăн шпал пулман. Завод руководителĕсем заявка паман тесе, хăма ăсатма тăхтаса тăчĕç. Эпир вара вĕсем пирки çак тĕлĕшпе ĕçлекен Главпа Наркомат умне пыйту хартрăмăр. Вĕсем эпир пыйтнине тивĕçлĕ татса пачĕç: завода хăма ăсатма хушрĕç. Унсăр пуçне Пароходствăн хăйĕн те çийĕнчех баржасем пулмарĕç. Çак сăлтавсем пирĕн ĕçе тăсса пычĕç.

Çавăн пек чăрмавсем Заготзернон Шупашкарти пункчĕне те пулчĕç.

Çапах та эпир, пур пек майсемпе усă курса, хамăр кимĕсене туллин ĕçлеттертĕмĕр, вырăнти таварсем турттармалли плана тултартăмăр.

Июнь уйăхĕнче пирĕн работниксем пурте пекех лайăх ĕçлерĕç. Уйрăмăнах пристань начальникĕн заместителĕ Хлонин юлташ, линейнăй механикăн ĕçĕсене тăваканĕ Игумнов юлташ, капитансем: Павлов, Куяшов, Семенов; механиксем: Кондратьев, Дубов тата Бессонов юлташсем ĕçре пултарулла та пуçарулла пулнăшĕç. Скрябин, Стремин, Григорьев механиксем, Чайников, Сленнев, Васин матроссем те вăхăта пăхмасăр, вăя шеллемесĕр ĕçлерĕç. Караванăй Ишкина пересып начальникĕ Яркин юлташсене те лайăх енĕпе палăртмалла.

Пассажирсене вăхăтра йышăнса ăсатса ярасси, пристаньре культурăллă йĕрке тăвасси—пирĕн тĕп ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Ку тĕлĕшпе эпир чылай ĕçсем турăмăр. Кĕтсе лармалли залпа номерсенчес—кăтартуллă йĕрке. Пассажирсен вокзалĕнче Хĕрлĕ кĕтес, парикмахерски усрăмăр, Отечественнăй вăрçă инваличĕсем валли ятларласа пӳлĕм уйăртăмăр, хаçат-журнал сутмалли киоск турăмăр.

Унсăр пуçне, пристань сывăхĕнчи çулсемпе пусма картлашкисене юсаса йĕркелерĕмĕр. Сыранна пристаньсем хушшинчи çулсемпе пусма картлашкисем халĕ пĕтĕмпех юсавлă. Атăл хĕррипе капкан тайăлăх çулсене тăпра купласа тата нумай пĕр 500 метр тăршшĕ хӳме тытса тӳрлетсе хула Советне пулăпăрăмăр. Пристань сывăхĕнче суту-илӳ тумалли вырăна йĕркелерĕмĕр, таварсем тытмалли склад турăмăр т. ыт. те.

Çак кирлĕ ĕçе парторганизаци секретарĕ Игумнов, местком председателĕ М. Иванов тата участок начальникĕ Захарова юлташсем пуçарса ертсе пычĕç. Вĕсем пристань çинче тата çав таврара культурăллă йĕрке тăвас тĕлĕшпе хăйсем активлăн хутшăнса ĕçлерĕç.

Шупашкар пристань коллективĕ Чикмо пристань коллективĕпе ăмăртса ĕçлет. Пристань коллективĕ социалистлă ăмăртура яланах малта пырассишĕн кĕрешет.

В. МОШКИН,
Пристань начальникĕ.

Кутемерсем уяв умĕн

Октябрьски районри Кутемер ялĕ революциччен, ытти чăваш ялĕсем пекех, тĕттĕм те кичем ял пулнă. Ватти-вĕтти пурте трахомпа асапланнă. Çак усал чирпе чирлесе ĕмĕрлĕхе сукăрланса юлнă çынсен шучĕ кашни килĕрех пулнă тесен те ытлашши пулмасть. Хут пĕлекенсем питĕ сахал пулнă. Ялти земски шкултан вĕренсе тухнисем пурĕ 9 çын, вăтам шкултан вĕренсе тухнисем 2 çын, вĕсем те пуян çынсен ачисем пулнă. Ялта пурăнакансем кĕнеке-хаçат тавраш не хăйсен ĕмĕрĕнче те курман. Чирлисем больница çинчен пачах пĕлмен тата пĕлме те пултарайман, мĕншĕн тесен больница таврара пулман. Çапла вара «сывалма» юмăç карчăксем патне кайнă, хĕрарăмăн çăмăлланмалла пулсан, эпи карчăка илсе килнĕ.

Уйхирте те, итемре те мăшăлна тавраш пулман, плугсем те 4—5 кăна шутланнă. Сухапуçне йывăç сӳре уйхирте ĕçлемелли тĕп хатĕрсем пулнă. Хресченсем хура пӳртре выçăлă-тутăлă асапланса пурăннă.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци ĕççыннисене ирĕклĕ те савăнăçлă пурнăç туса пачĕ. Уйрăмăнах 1930 çулта, ялта колхоз организацилесен, ялти пурнăç тĕпренех улшăнчĕ. «Выçлăх», «тарçă», «ыйткалакан» текен сăмахсем ял хушшинчен ĕмĕрлĕхех тухса ӳкрĕç. Колхозра тăрăшса ĕçлекен хресченсем пуян та культурăллă пурнăçпа пурăнма тытăнчĕç. Культурăлăх та ӳснĕçемĕн ӳссе пычĕ. Ялта 7 çул вĕренмелли шкул, вулав çурчĕ, акушерка тата трахом пункчĕсем организациленĕ. Шкул çулне çитнĕ ачасем пурте вĕренме сӳреççĕ. Трахом тата акушерка пункчĕсенче Кутемер ял çыннисемех М. Павлова, А. Федорова юлташсем темиçе çул хушши ĕçлеççĕ. Кăçал кăна акушерка пунктĕнче 10 хĕрарăм ача çуратнă.

Кутемер ял çыннисем вăтам тата аслă шкулсенче вĕренме тытăнчĕç. Аслă шкултан вĕренсе тухнă çынсен шучĕ ӳснĕçемĕн ӳссе пырать. Кутемер ял çыннисенчен халĕ 19 çын агроном, 4 çын врач, 2 çын инженер, 35 çын учитель, 2 çын ветеринари врачĕ пулса ĕçлеççĕ. Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче кăна 95 ача çичĕ çул вĕренмелли шкултан, 23 çын аслă шкултан вĕренсе тухнă. Отечественнăй аслă вăрçă фронтĕнче тăшмана хирĕç паттăрăн кĕрешнĕшĕн пĕр çынна Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă, 12 çынна орденсемпе медальсем парса наградăланă.

Колхозра ĕçлекенсем те фронтри воинсенчен юлас мар тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçленĕ. И. Глухова юлташа вăрçă вăхăтĕнче «За трудовую доблесть» медальпе тата 2 çынна Чăваш АССР Верховный Совет президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

Кутемер ялĕнчи «Коммунизм» колхоз çулран çулах пысăк тухăçлă тырпул туса илет. Иртнĕ çул кашни гектартан вăтам шутпа 13 центнера яхăн тĕштырă туса илнĕ. Обязательствăсем тăрăх тырă тата ытти парăмсене парса татсан, тĕрлĕ фондсене пĕтĕмпех туна хыççăн, кашни ĕçкунĕ пуçне 2,9 килограмм тырă, 5 килограмм çĕрулми валеçсе панă. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне кашни çулах ытлашшинех тултарса пырать. Колхозăн лаша, ĕне, сурăх, сысна тата чăх-чĕп фермисем пур, вĕсем çулсеренех пысăк тупăш параççĕ.

Колхоз Чăваш республики 25 çул тултарнă уява пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илет. Халĕ, 1945 çулăн аш-какай, сĕт-çу, çамарта тата ытти продуктсене те пĕтĕмпех парса татнă тата çитес çулăн 22 центнер аш-какай парса хунă.

Колхоз çуракинче планне 117 процент тултарнă. Халĕ кунта тырпул пухса кĕме пикенсех хатĕрленеççĕ. 2 жнейка, 1 молотилка, 15 стан урапа юсаса хунă. Çавăсемпе çурласем çителĕклĕ, вĕсене туптаса шăллатса хунă. Михĕсем, шăналăксем, вĕрен-пăявсем те çителĕклĕ.

Çапла кĕтсе илеççĕ Кутемер ялĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем Чăваш республики 25 çул тултарнă уява.

Ник. АНДРЕЕВ.

ДЕПУТАТСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

Чăваш АССР Верховный Совечĕн IX-мĕш Сессийĕ 1945 çулхи июлĕн 4-мĕшĕнче 10 сехетре Советсен Урчĕн ларуне залĕнче уçалать.

РЕСПУБЛИКА ЮБИЛЕЙĔ УМĔН

Ирĕклĕх тивлечĕ

Чăваш халăхĕ хăйĕн юбилейне пысăк савăнăçпа кĕтсе илет. Çав кун вăл хăйĕн ирĕклĕхĕпе ĕç прави çĕнтерсе чапа тухнине палăртать.

Эпĕ кунта чăваш халăхĕ Аслă Октябрьте илнĕ ирĕклĕхпе вĕренӳ прави мĕнле пысăк выран йышăнса тăни çинчен каласшăн.

Чăвашсен ятне документсенче малтанхи хут XVI-мĕш ĕмĕрте асăнаççĕ. Анчах çав ята тытса тăракан халăх тӳсме çук чуралăхра пурăннă. Чăвашсен нимĕнле культура та пулман, пулас та çук, — тенĕ унччухне пирĕн халăха. Мĕншĕн апла?—тесе ыйтсан, влаçа хăйсен аллинче тытса тăракансем тĕрлĕ ĕмĕрсенче пĕр пекех ответленĕ. XVI-мĕшпе XVII-мĕш ĕмĕрсенче çапла калана: «Чăвашсем пăхма çынсем пекех, анчах вĕсен ăсĕ те, этем сăнĕ те çук, чăвашсем выльăхран уйăрăлса тăмаççĕ», тенĕ. 1829 çулта эпир çапла сырнине тĕл пулатпăр: «Чăвашсем çав тери чухăн чĕлхепе калаçаççĕ. Вĕсен чĕлхинче шухăша пĕтĕмĕшлĕн пĕтĕçтерекен пĕр сăмах та туйма çук». «Чăваш чĕлхи питĕ чухăн; унăн словарĕнче пĕтĕмпе те 1646 сăмах кăна» (1840 çул). «Чăвашсен культура пулман тата пулас та çук» (1903 çул).

Кам та пулин—чăвашсем вĕренме те, творчество ĕçне туса пыма та пултараççĕ, вĕсене çавна валли пĕр япала кăна кирлĕ: вĕсене наукăна творчествăра ĕçлеме ирĕк памалла, тесе каланичен эпир çаплаçсем хыттăн кулнă.

Чăваш халăхĕ культура çинчен ĕмĕтленни ун чухнехи влаçсен политикине хирĕç пулнă-çке-ха! Ун чухнехи вăрттăн документсенче çакнашкал сăмахсене тĕл пулма пулать: «Инородецсене вĕрентни сиенлĕ: вĕсем пăхланма тытăнаççĕ, тĕттĕм çынсене тытса тăма çăмăлрах», теççĕ ун чухне.

Влаçăн кашни представителĕ халăха çапла каласа ĕнентерме пăхнă: наука — халăх тивĕçĕ мар, унăн тивĕçĕ—ĕçлесси, туха тăвасси, акасси, тырă вырасси тата налогсем тӳлесси.

1807 çулта Çĕрпӳ исправникĕ çапла сырнă: «Чăвашсене çутта кăларни сиенлĕ, мĕншĕн тесен вĕсем çĕрĕçне манса каяççĕ», тенĕ.

1893 çулта Хусан губернинчи земствăра хресчен ачисене çапла калана: «Сана вĕренни мĕне кирлĕ; санăн сухапуçĕ çыçĕнчен утмалла; пурте вĕренме тытăнсан, çĕрĕçĕпе кам ĕçлĕ?», тенĕ. Влаçа хăйсен аллинче тытса тăракансем хăйсен çав сăмахĕсене çине тăрсах пурнăçа кĕртсе пынă. Тĕрĕссипе илсен, вырăс халăхĕ те ĕлĕкхи саманара тĕттĕмлĕхре осапланнă.

Истори çакна палăртать: вырăс чĕлхине наукăра усă курма малтанах ирĕк пулман.

1745 çулта Ломоносов лекцисене вырăс чĕлхинче вуламашкăн ирĕк пама ыйтать. 1756 çулта вăл, Миллер хушаматлă немĕс академикне хирĕç тăрса, халăхăн аялта тăракан сийĕсене гимназипе университетра вĕренме ирĕк пама ыйтнă. «Вĕреннĕ çынсемпе пирĕн мĕн тумалла?» — тесе каланине хирĕç Ломоносов çапла ответленĕ: вĕреннĕ çынсем фабрикăсенче ĕçлеме, халăх сывлăхне сыхлама, архитектура, правосуди ĕçĕсене туса пыма, çанталăка пĕлсе тăма, çар ĕçне туса пыма кирлĕ, тенĕ

Вырăс ученăйĕсем вырăс мар халăхсене те вĕренӳ прави парассишĕн тăнă.

Чăваш чĕлхи культурăпа çутĕç хĕпăлĕ пулса тăма пултарассине çирĕплетсе паракан малтанхи кĕнекесем тухаççĕ. 1785 çулта Чулхула епископĕ Дамаскин тĕрлĕ чĕлхесен словарĕсене тăвать, çав шутрах вăл чăваш чĕлхи словарьне те

сырать. Унта вăл 11.000 вырăс сăмахне чăвашла куçарса тата французпа вырăс чĕлхисенчен уйрăм текстсем чăвашла куçарса темиçе опыт кăтартса парать.

XIX-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче Н. И. Ашмарин профессор чăваш чĕлхи словарьне тума тытăнать. Унта вăл пуринчен ытларах чăвашсен каласу чĕлхине кĕртсе ярать. Унăн словарĕ, ăна чылай кĕскетнĕ пулин те, 17 тома аран-аран вырнаçать.

Тăтăшах пусмăрласа пынине пăхмасăрах, чăвашсен ăслăлăх вăйĕсем ерипен ĕмĕр хыççăн ĕмĕр палăрса, ӳссе пыраççĕ. Вырăс халăхне çутта кăларассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлекен çынсем пулăшнипе чăваш халăхĕнчен тухнă уйрăм талантсем наукăпа литература ĕçĕ патне çул уçма тытăнаççĕ. Вырăссен Ломоносовĕ пекех, вĕсем пурнăçра нумай иккĕкем тӳссе ирттереççĕ.

XIX-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче И. Я. Яковлев Хусанти университетра, нумай тĕрлĕ асапсем тӳссе, çине тăрсах вĕренет. Çав вăхăтрах вăл чăвашсен Чĕмпĕрти шкулне тытса тăрать. Кайрантарах çав шкул чăвашсем хушшинче вĕренӳ ĕçне сармалли чылай пысăк культура центрĕ пулса тăрать.

И. Я. Яковлев пек культурниксем халăхăн вăйне яланах çирĕп шанса тăнă. Халăхăн аллăта тăракан массисем ăслăлăх ĕçне туса пыма пултараймаççĕ тесе каланине вĕсем хăйсен ĕçĕпе сирсе пынă.

Аслă Ломоносов, вырăс халăхĕн ăслăлăхшăн çуралма тивĕçлĕ ывăлĕсене чĕнсе, çапла сырнă:

Ют çĕрсенчен тем кӳриччен,
Сире Таван çĕршыв чĕнет;
Хăй ăшĕнчен, хăй чĕринчен
Эсир тухассине кĕтет.
Сирĕн кунçулăр пархатăрлă,
Вĕренĕр, ĕçлĕр те хастарлăн,
Кăтартăр пĕтĕм тĕнчене
Россия çĕрĕ чăнлипех
Хăй ăшĕнче те Платонсем,
Чи çивчĕ ăслă Невтонсем
Çитĕнтерме пултарнине.

Аслă ученăй Ломоносов вырăс халăхне чĕнсе калани ответсăр юлман пулсан, ытти халăхсен те вара, уйрăмăн илсен чăвашсен, И. Я. Яковлев вăй хурса ĕçлени культура ĕçĕ патне пиншер çамрăк вăя çĕклерĕ.

Таван чĕлхепе усă курмалли ирĕке çĕнтерсе илни халăх валли чăн-чăн чăваш чĕлхипе çырнă вĕренимлли литература, хаçатсем, илемлĕ литература ӳстерсе çитĕнтерме май пачĕ. Çапла, Федоровăн «Арçури», Ивановăн «Нарспи» поэмисемпе ытти произведенийĕсем çуралаççĕ. Пĕлӳлĕхĕн тĕрлĕ енĕсемпе халăха ăнланмалла çырнă кĕнекесем туха пуçлаççĕ. Чăваш халăхĕн хăйĕн писательĕсем, историкĕсем, художникĕсем, техникĕсем çуралаççĕ. Анчах ĕлĕкхи саманара вĕсем пĕчченшерĕн кăна пулнă-ха. Пурнăç условийĕсем çаплипех йывăр пулнă. Патша саманинче культура ĕçне влаçсем тăтăшах чăрмантарса, пусарса пынă. Халăхăн ăсхакăл вăйĕ пусмăрлăх айĕнче хускалмасăр выртнă.

Акă Аслă Октябрь çитрĕ. Пирĕн çĕршыври пур халăхсем те ĕçлеме, вĕренме, пурнăçа хăйсем пĕлнĕ пек йĕркелеме ирĕк тупрĕç. Российăри халăхсем йывăр ыйăхран вăраннă пекех пулчĕç, пур çĕрте те творчество ĕçĕ вĕреме тытăнчĕ. Чăваш халăхĕ хушшинчи культура тĕлĕкре те ĕмĕтленмен пек хăвăртлăхсемпе ӳсме тытăнчĕ.

Ĕлĕкхи саманара «варвăрсем» «нимĕн тума та пултарайман çынсем» вырăнне хунă халăхранах культурăллă çынсем çуралчĕç. Революциччен чăваш ялĕнче хут нĕлекен çын сайра пулнă пулсан, халăхи вăхăтра вара çут пĕмĕн çынна сайра тĕл пулма пулать. Кашни ялтах аслă шкултан вĕренсе тухнă çынсем чылай.

Чăвашсен халĕ ĕнтĕ хăйсен врачĕсемпе агрономĕсем, инженерĕсемпе техникĕсем, художникĕсемпе писателĕсем, литературĕсемпе журналисчĕсем, тĕпчевçĕ ученăйсем — историксем, естествоиспытательсем, математиксем тата ытти çынсем те пур. Нумай ĕмĕрсем хушши пусăрăнса тăнă халăхăн шалти вăйĕ, çиеле тухса, ытларах та ытларах сарăлса, хăватланса пырать. Пур çĕрте те эпир пĕр хаваслă сасă илтетпĕр:

Çут ирĕк-хĕвел тăвăл витĕр çутатрĕ,
Таван аслă Ленин кăтартрĕ çула.
Пирĕн халăх тивĕçĕшĕн Сталин
Ӳстерчĕ,
Çĕклерĕ ĕçе, чĕнчĕ паттăр пулма.

Профессор Н. В. НИКОЛЬСКИЙ.

ХУСАН.

Колхозри электростанци

КАЛИНИНО. (Хамăр корр.). Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр вăхăта пăхмасăрах Çавалкас Măратри «Сутталла» колхозра 1944 çулта электростанци тума тытăннăччĕ. Ăна колхозниксем Чăваш республики 25 çул тултарнин юбилейĕ тĕлне туса пĕтерме йышăннăччĕ.

Халĕ электростанцие туса пĕтерсе ĕçе ячĕç. Колхоз правленийĕ, ял Совечĕ тата ытти обществăллă çуртсемсĕр пуçне, кунта Ильич лампи колхозниксен килĕсенче те çутăлчĕ. Çак кунсенче мĕнпур колхозниксен килĕсене, выльăх-чĕрлĕх çурчĕсемпе витисене çутă кĕртсе çитереççĕ. Çаван пекех çутă итем çине кертнĕ, кăçал кунта вара электричество вайĕпе авăн çапма хатĕрленеççĕ. Тата электричествăпах арманпа çăм тапакан машинăна ĕçлемелле тунă.

Е. ВОЛКОВ.

Франции коммунистсен партийĕн съезчĕн манифесчĕ

ПАРИЖ, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Франции коммунистсен партийĕн X-мĕш съезчĕ Франци халăхне çапла чĕнсе калана.

«Французсем, арçынсемпе хĕрарăмсем! Франции коммунистсен партийĕ, Франципишĕн асап курнă çынсем тата халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ паттăрсем пуринчен ытла панăскер, хăйĕн вуннăмĕш съездĕнче Франципе унăн халăхĕшĕн анчах тăрăшакан хăйĕн политикин итогĕсене пăхса тухрĕ. Пилĕк çул хушши вăрттăн ĕçлесе пурăннă йывăр условисенче, тискеррĕн хĕсĕрленине хирĕç кĕрешсе, Франции коммунистсен партийĕ тăшмана хирĕç ыракансен, захватчиксене хирĕç кĕрешекенсен пуçĕнче пычĕ. Франции коммунистсен партийĕ французсене фашизма хирĕç пĕрлештерес тĕллĕшпе мĕн кирлине пурне те тунă вăхăтра, трестсемпе вĕсен агенчĕсем, Петэнпа Лаваль пуç пулса тăракан гитлерла шпионсен ушкăнĕ нацие уйăрма, вăл хӳтĕленме пултарассине вăйсăрлатма, ăна тăшмана сутма тăрăшрĕç. Çав преступниксем 4 çул хушши ытла нацистсен хурахла ĕçĕсене пулăшса пычĕç, çавна пула тупăш илсе тăчĕç. Вĕсем çынсене тĕрмесене тата лагерьсене пăрахрĕç, çака-çака вĕлерчĕç. Паян, гитлерла фашизма Франци патриочĕсем тăшманипе, пирĕн союзниксем — Англипе Америка пулăшнипе тата пуринчен ытла Совет Союзĕпе унăн Сталин Маршал ертсе ыраканн паттăр Хĕрлĕ Çарĕ жертвăсем тӳссе çар паттăрлăхне кăтартнипе пула поражени тӳснĕ кун,—çав çынсемех наци ĕçĕсен тĕрлĕ звенисенче ĕçлеççĕ. Вĕсем Франципе ура çине тăратассине хирĕç ыраççĕ, Франципе хирĕçле плана пурнăçа кĕртсе ыраççĕ, çав шутпала яланах саботаж тăваççĕ, юрп ĕçлемесĕр лараççĕ.

Трестсен çав çынинисем çĕршывра анархи, ултав тата йĕркесĕрлĕх туса хурса, Франципе тĕнчери аслă державăсен выранне йышăнма чăрмантарасшăн. Вĕсем Франци халăхне хăйĕн çĕршывĕнче тепĕр хут чура туса хурасшăн.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ Франципе урăхлатса çĕнетессишĕн пынă кĕрешӳ, пирĕн напиллĕ никама пăхăнманлăхăн пирвайхи условийĕ пулса тăраканскер, пирĕн пĕтĕм халăхăн кĕрешĕвĕ пулса тăрать. Вăл — рабочисен, хресченсен, техниксен, инженерсен, интеллигентсен кĕрешĕвĕ, Франципе хуçалăх, политика тата ăс-тăн енчен урăхлатса çĕнетес текенсен кĕрешĕвĕ пулать. Ура çине тăратнă хăйĕн индустрийĕпе, çĕнĕлетнĕ ялхуçалăхĕпе, ăнăçлан ыраканн çуту-илӳпе тата ытти пур тĕлĕшпе те хастарлăн ĕçленипе усă курса, пирĕн çĕршыв пĕтĕм тĕнче умĕнче ирĕклĕх, прогресс çĕршывĕ пек, пĕлӳсен вучахĕ пек курăнса тăтăр тесе тăрăшаççĕ çынсем.

Французсем, арçынсемпе хĕрарăмсем! Таван çĕршыва аркатма тăрăшакан шуйтанла плансене пĕтерсе тăкас пулать. Франципин пуласлăхĕ, унăн экономика, финанс тата политика тĕлĕшпе никама пăхăнманлăхăн хамăр алăра. Çав пуласлăх пурнăçлантăр тесен, кирек епле пулсан та реконструкци ĕçне тыттăнмалла, производствăшăн кĕрешме тытăнмалла. Ытларах ĕçлес! Çакă ĕнтĕ Франции коммунистсен партийĕн вуннăмĕш съезчĕ каласа хăварнă чи пирвайхи тата чи кирлĕ тивĕç пулса тăрать».

Производствăна ӳстерес тесен, тенĕ малалла манифестра, снабженипе ыракан кĕрешӳре çĕнтермелле. Çителĕклĕ таран ĕçукçи тата шалу парса тăмалла, ялхуçалăх продукчĕсен хакне йĕркелемелле, ватăлнă ĕççыннисене паракан пенсие хăпартмалла, вăл пенсие хресченсене, ремесленниксене, вак сутăçăсене те памалла тумалла. Налог пухассине тĕрĕс йĕркелемелле, сутăнчăксен пурлăхне тӳрлетса илмелле. «Çаван пекех гата экономикан пур пайĕсенче те, аслă администрацире те татăклă тасату туса ирттермелле. Вăширен юлнă пур йĕркесĕр йăласене те, фашизмăн юлашкийĕсене пурне те пĕтерсе тăкмалла. Петэнран пуçласа пур сутăнчăксене те хăвăрт тата пĕр хĕрхенмесĕр наказани памалла. Юлашкинчен, производствăпа улăштăван шултăра средствисене, çаван пекех тата монополисене хăвăрт наци аллине памалла. Таван çĕршыва пĕлмен тата Франции сутнă трестсене пĕтерсе хумалла. Пĕр сăмахпа каласан, хирĕç тăрса кĕрешекен Халăх Совечĕн программине пурнăçа кĕртмелле».

Нацие ура çине тăратасси тата ăна асла кăларасси чăн-чăн демократиллĕ условисенче кăна пулма пултарнине палăртса, «кирек епле никама пăхăнманлăхăн принципĕ те нацире хăйĕнче» пулнине шута илсе тата çав принципа манса кайни, ăна хакламанни Франции 1940 çулхи июнь уйăхĕнче катастрофа патне илсе çитернине палăртса, манифестра малалла çапла калană: «Франципи Аслă Революцин чаплă тапхăрĕнчи Пĕрремĕш республикăн хăвачĕпе чысне пана вăйлă демократин принципĕсем патне тавăнмалла».

Манифестра фашизмăн юлашкийĕсене тĕппипех çĕнтермешкĕн пĕрлĕх кирлине палăртнă хыççăн малалла çапла калана: «Франципи коммунистсен партийĕн 900 пин членĕ ячĕпе вуннăмĕш съезд социалист юлташсене Франципи рабочисен аслă партийĕнче коммунистсемпе пĕрлешме чĕнет; çав пĕрлĕх пирĕн çĕршыври рабочăй класа иксĕлми вăй, пĕрлешме кĕрешпултарулăх парĕ».

ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН ЛЕКТОРĔСЕМПЕ ПРОФЕССОРĔСЕН АССОЦИАЦИЙĔ ЫЙТНИ

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Пĕрлешнĕ нацисен университетсенчи лекторсемпе профессорсен пĕтĕм тĕнчери ассоциацийĕн генеральнăй совечĕ резолюци йышăннă. Çав резолюцире Пĕрлешнĕ нацисен ученăйĕсем немĕс профессорĕсемпе ученăйĕсене вăрçа пуçланиччен те тата вăрçа вăхăтĕнче те нацистсен влаçне пулăшса тăнăшăн айăплама ыйтаççĕ. Немĕс профессорĕсемпе ученăйĕсем биологи тĕлĕшпе суя теорисем сарнă, çаван пирки вĕсем ытти расăсене хĕсĕрленĕшĕн ответ тытма тивĕçлĕ. Немĕс ученăйĕсем, Германин мĕнпур вăй-халне тата пĕтĕм пурлăхне вăрçа хатĕрлес тесе, наукăна пăсма пуläăнă, оккупацилесе тăнă çĕршывсенчи университетсен библиотекисене, лабораторисене тата музейсене ишĕлтерес ĕçе хутшăннă, наукăн хальхи çитĕнĕвĕсемпе усă курса, вĕсем граждансла халăха тата политика тĕлĕшпе айăпласа тытса хупнă çынсене опытсем туса асаплантарна, çав опытсене тӳснĕ çынсем инвалид пулса юлнă. Резолюци çав тискер ĕçсене хутшăннă немĕс профессорĕсемпе ученăйĕсене пурне те хыта айăплама ыйтать.

ФРАНЦИ ПОЛЬШАН ХАЛĂХ ПĔРЛĔХ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЙЫШĂННИ

ПАРИЖ, июнĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрах, Франции Варшавăри представителĕ Гарро çапла пĕлтернĕ: Франци Польшăн Халăх Пĕрлĕх Правительствине йышăнать, тенĕ.

ГЕРМАНИ ÇĔРНЕ СОВЕТ ÇАРĔСЕМ ОККУПАЦИЛЕСЕ ТĂМАЛЛИ ВЫРĂНТАН СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ КАЯЛЛА ЧАКНИ

БЕРЛИН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Июлĕн 1-мĕшĕнче иртен пуçласа, союзниксен командованийĕ Германи çĕрне Совет çарĕсем оккупацилесе тăмалли вырантан Англи тата Америка çарĕсене каялла куçарма тытăннă.

Пирĕн çарсем Германи çĕрне союзниксем каялла куçса пынă май йышăнса пыраççĕ, халĕ вĕсем Шверин, Галле, Лейпциг, Веймар, Эрфурт, Плауэн хулисене кĕнĕ.

ФИНЛЯНДИ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИЙĔ ГЕЙНРИКС ВЫРĂНТАН ТУХНИ

ХЕЛЬСИНКИ, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Генерал Акрель Эрик Гейнрикс Финляндин хĕçпăшалли вăйĕсен главнокомандующийĕнчен тухма ыйтнă. Финлянди президенчĕ Маннергейм фельдмаршал вăл ыйтнине килĕшнĕ.

ФИНЛЯНДИ ГЕНЕРАЛЬНАЙ ШТАБĔН РАЗВЕДКА ОТДЕЛНЕ ПĔТЕРНИ

ХЕЛЬСИНКИ, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Финлянди правительстви июнĕн 30-мĕшĕнче ыйтăнна тăрăх, Финлянди генеральнăй штабĕн разведка отделне пĕтĕмĕшпех пĕтернĕ.

СЛОВАКИН ПУКАНЕЛЛЕ «ПРАВИТЕЛЬСТВИН» ЧЛЕНĔСЕНЕ ПРАГĂНА ИЛСЕ ПЫНИ

ПРАГА, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Иртнĕ кунсенче çапла пĕлтернĕччĕ: Чехословаки влаçĕсем ыйтнипе Америка çар влаçĕсем хăйсем тытса илнĕ «Словаки правительствин» «президентне» Иосиф Тисона тата çав «правительство» членĕсене те Чехословаки влаçĕсене пама килĕшнĕ, тенĕччĕ.

Халĕ çав Гитлер тарçисене пурне те Прага хулинне илсе пынă.

ГАХ ВИЛНИ

ПРАГА, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Прăри радио çапла пĕлтернĕ: Чехословакие нимĕçсем йышăнса тăнă вăхăтра Богемипе Морави протекторачĕн пуканелле «президенчĕ» пулнă Эмиль Гах июнĕн 30-мĕшĕнче вилнĕ. Вăл Прага хулинчи тĕрмере вилнĕ.

НИМĔÇ ГЕНЕРАЛĔ КЕЙНЦЕЛЬ ХАЙНЕ ХАЙ ВИЛНĔ

ЛОНДОН, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, 21-мĕш армейски группа штабĕ çумĕнче хупса усранă немĕç генералĕ Кейнцель, Буш генерал штабĕн начальникĕ пулнăскер, хăйне хăй вилнĕ. Вăл Германин аслă офицерĕсенчен чи малтан Германи паранасси çинчен Монтгомери фельдмаршалпа каласу пуçласа янă.

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ РИББЕНТРОП ÇАРАТСА ПУХНА ЫЛТТĂНА ТУПНĂ

ЛОНДОН, июнĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Американецсен 7-мĕш армийĕн çарĕсем Зальцбург сывăхĕнче (Австри) Риббентроп çаратса пухнă ылттăна тупнă. Унта ылттăн чăмаккисем тата Англипе Америкăн ылттăн укçисем 7 миллион кĕренке стерлинглăх пулнă. Вăл ылттăн Риббентропăн Зальцбург сывăхĕнчи именнийĕнче пулнă, Америка çарĕсем сывхарса пынă чухне ăна çĕре чавса пытарнă, тесе пелтереççĕ.

Пăпкă океан çинчи вăрçа

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Пăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕпăшалли вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калană: Голланди Индийĕн Борнео утравĕн кăнтăр-хĕвелтухăç çыранĕнче Австралин типçĕр çинче кăшкен часĕсем Баликпапан хули районне пырса аннă, тăшмана малалла тапăлса пыма укреплени тунă. Десант антарас ĕçе Американ, Австралин тата Голландин тинĕс-çар вăйĕсем пулăшнă. Австрали çарĕсем утрав ăшне малалла хăвăрт кĕрсе пыраççĕ, вĕсен сухатăвĕсем пачах та пысăк мар.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтд пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 1-мĕшĕнче американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă 600 бомбардировщикне яхăн, Мариан утравĕсем çинчен вĕçсе улăхса, Хонсю утравĕ çинчи Куре, Симоносеки, Убе хулисене, çаван пекех тата Кюсю утравĕ çинчи Кумамото хулине тапăннă, вĕсем çав хуласем çине 4.000 тонна вут тивертекен бомбăсем пăрахнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Улатăрти чугун çул транспорчĕн техникумĕ 1-мĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникумра çакăн пек отделенисем пур: 1) технологи отделенийĕ (вăл ирĕлтерсе е хĕртсе çыпăçтарас ĕçе пĕлекен техник-технологсене вĕрентсе хатĕрлет), 2) механически отделени (вăл пăравус хуçалăхĕн техник-механикĕсене вĕрентсе хатĕрлет).

Заявленисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Адрес: гор. Алатырь, Первомайская, 50, Железнодорожный техникум.

2—1.

Заводăн ӳсĕм çулĕ

Сухайкасси колхозникĕсем хĕрсе тырă вырнă вăхăтра вĕсен уйне кăвакрах тĕслĕ костюм тăхăннă çынсем пынă. Çак çынсен картузĕсем çинче пилĕк кĕтеслĕ çăлтăрсем, çăлтăран варринче пăравус кӳлепи пулнă. Вĕсем Мускавран килнĕ инженерсемпе техниксем пулнă. Аллисенче вĕсем çутă тимĕр лентăсем, пĕчĕк ункăлă патаксем тытнă. Çĕр лаптăкне вĕсем тĕплĕн виссе пазăртнă. Ку вăл 1933 çулта пулнă...

1934 çул. Виçнĕ лаптăксем çине юпасем лартнă. Çакăн хыççăн вара Канаш çывăхĕнчи çынсем кунта завод пуласси-не пĕлнĕ. Çак хыпар Чăваш республики тăрăх хăвăрт сарăлнă.

— Канашра вагонсем юсакан завод пулать, тет,—каласа чылай çĕрте. Таврари ялсенче çынсем завод пулмалли выранна чул, хăйăр, кирпĕч, йывăç тата ытти строительствăлăх материалсем турттарма тытăннă. Комсомольски районри Çĕнĕ Каçал каччи Алексей Карягин та завод пулмалли выранна чул турттарнă. Ăна рабочисен пурнăçĕпе ĕçĕ, заводри кăткăс станоксем тахçанах интереслентернĕ. «Пĕрпĕр ĕçе вĕренесчĕ те ман, çак заводра ĕçлесчĕ», тесе шутланă Алексей. Кайрапахпа вăл завод тунă çĕре ĕçлеме килнĕ, слесарь пулма вĕреннĕ. Часах мастера тухнă. Нумаях пулмасть эпир унпа завод комитетĕнче тĕл пулса паллашрăмăр. Карягин юлташ, халĕ завком председателĕн заместителĕ пулса ĕçлекенскер, заводăн ӳсĕм çулĕ çинчен çапла каласа пачĕ:

— Чи малтанхи кунсенчех строительствăлăх материалсене хатĕрленĕ, складсем, рабочисем валли столовăйсем, пурăнмалли çуртйĕрсем тунă. 1934 çулта вагонсене Канаш станцин деповĕнче юсанă, ун хыççăн ăна хăватлăха туса хатĕрленĕ мастерскойра юсама пуçланă. 1935 çулта йĕркунне заводра чи малтанхи цеха, вагонсем юсакан цеха, туса пĕтерсе ĕçе янă. Черепне механически, урапа тăвакан, рессор тăвакан, йывăç каскалакан цехсем ӳссе ларнă. 1937 çулта заводра электростанци ĕçлеме пуçланă.

Завода тунă çĕрте республикăри колхозниксем мĕнле ĕçленине пĕр сăмахпа каласа пама çук. Кашни колхозник строительствăна хутшăнма тăрăшнă. Унăн никĕсене хывнă çĕре пĕр-икĕ кирпĕч хăй ячĕпе хурса хăварас тенĕ. Хастарлăн ĕçлесе, завода иккĕмĕш пилĕкçуллăхăн никĕ çулĕнче ĕçе янă. 1938 çулта унăн мĕнпур цехĕсем ĕçлеме пуçланă.

Çапла вара, Канашра вагонсем юсакан тата чугун çух валли запаслă пайсем хатĕрлекен завод ӳссе ларнă. Завод малтанхи çулсенчех пиншер вагонсем юсаса кăларнă. Вагонсем юсаса кăларас ĕç çулсеренех ӳсе пынă. Продукци туса кăларасси, 1940 çулхипе танлаптарсан, 1941 çулта—162 процент, 1942 çулта —337 процент, 1943 çулта—438 процент, 1944 çулта—507 процент чухлĕ ӳснĕ. Çапла вара, иртнĕ çулта вăрçăччен-хи 1940 çулхинчен 5 хут ытларах продукци туса кăларнă. Вăрçă çулĕсенче вагонсем юсаса кăларасси уйрăмах пумай ӳснĕ. 1944 çулта 1940 çулхинчен пин вагон нумайрах юсаса кăларнă.

Вăрçă çулĕсенче заводра çĕнĕ цехсем шăтса ӳснĕ. Çĕнĕрен чугунпа хурçă шăратакан цех, кислородпа карбиднăй станци тата спецпродукци тăвакан цехсем тунă. Спецпродукци туса кăларассине завод çулран çулах ӳстерсе пынă. 1940 çулхипе танлаптарсан, спецпродукци туса кăлармалли плана 1941 çулта 5 хут, 1942 çулта — 23 хут, 1943 çулта—31 хут, 1944 çулта—40 хут ӳстернĕ.

Заводри рабочисем çĕршывна фронта мĕн кирлине ытлăн-çитлĕн туса кăларма тăрăшнă. 1944 çулта кашни рабочи 1940 çулхинчен 10 хут ытларах продукци туса кăларнă. Çав вăхăтрах продукцин хакне 2,5 хут чакарнă. Кăçал спецпродукци туса кăларакан пур участоксенче те поточный меслетпе ĕçлеме тытăннă, алăпа тумалли ĕççене механизациленĕ.

Спецпродукци туса кăларакан рабочисем вăрçă кунĕсенче цехран тухма пĕлмесĕр ĕçленĕ. Формовщица Р. Азизова юлташăн бригади хăйĕн заданийĕсене ялтах ирттерсе тултарать. Бригада ВЛКСМ Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать. Азизова юлташ задание тултармасăр нихçан та ĕçе пăрахман. Ахальрен мар ĕнтĕ, вăл нормăна яланах 750—800 процент тултарать. Сварщица Капранованă заводра пурте пĕлеççĕ. Вăл нормăна куллен 500 процент тултарнипе чапа тухнă. Вагонсем юсакан заводра вĕсем пек паттăрсем темиçешерĕн шутланаççĕ. Крупенко, М. Чупко юлташсем те нормăран 4—5 хут тухăçлăрах ĕçлеççĕ. Спецпродукци цехĕсем вăрçă вăхăтĕнче лайăх ĕçленĕшĕн пĕр Халăх Комиссариачĕ завода 32 хут тав тунă, кашни уйăхра 40-шер пин тенкĕ укçа парса премиленĕ.

Заводăн вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕсем мухтава тивĕçлĕ. Вагонсем юсаса кăларнисĕр пуçне кунта Хĕрлĕ Çара питех те кирлĕ хатĕрсем юсаса тата çĕнĕрен туса панă. Вĕсемшĕн завод коллективĕ Хĕрлĕ Çарăн соединенийĕсемпе чăсĕсем тав тунине темиçе хут та илме тивĕçлĕ пулнă.

Заводри рабочисен ĕç тухăçлăхĕ калама çук хăвăрт ӳссе пынă. Вăрçă çулĕсенче ĕç тухăçлăхĕ 3,5 хут, стахановецсен йышĕ 2 хут ӳснĕ. 1944 çулта заводри мĕнпур рабочисенчен 74 процентĕ стахановецсем пулнă. Социализмлă ăмăртура завод пĕрре мар мала тухнă. ВЦСПС-па Çулĕĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне завод тăваттăчĕн уйăх ĕнтĕ хăйĕн аллинче тытса тăрать.

Производствăра сахал мар çынсене вĕрентсе ӳстернĕ. Малтанхи кунсенчен пуçласах ĕçлекен чăвашсем Алексей, Мария, Филипп Карягинсен ретĕнче эпир йывăç каскалакан цех начальникне Михаил Кислякова, Елчĕк районĕнчен килнĕ Василий Алексеева, инженера Михаил Леонтьева, слесаре Федор Шашкова, малтан çĕр чавакан, халĕ диспетчер пулса ĕçлекен Иван Гаврилова, чернорабочи пулнă, халĕ аслă кочегарта ĕçлекен Никифор Николаева тата ытти юлташсене тĕл пулатпăр. Вĕсем—завод никĕсне хуракансенчен пĕрисем. Халь вĕсем—чаплă мастерсем, специалистсем.

Карягинсем хăйсен нормисене 170—314 процент, Алексеев—300 процент тултарса ĕçлеççĕ. Лайăх ĕçлĕн Алексеев, Леонтьев тата фрезеровщик Иван Осипов юлташсем правительствăн «Ĕçри хастарлăхшăн», «Ĕçре палăрнăшăн» медалĕсене илме тивĕçлĕ пулнă.

Вăрçă вăхăтĕнче завода нумай çĕнĕ çынсем пырса, паллă специалистсем пулнă. Ксения Кириллова вăрçăччен Таван районĕнче, колхозра ĕçленĕ. Халĕ вăл—формовщица, заданисене ирттерсе тултарать. Ăна «Отличный вагонник» значокпа наградăланă. Перасковья Монина (транспорт цехĕ), Мария Иванова (вагонсем юсакан цех) тата ытти çынсем те хăйсен нормисене 250—300 процент тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсен те кăкăрĕсем çинче «Отличный вагонник» значоксем пур.

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче кашни рабочин чĕри çĕнтерӳшĕн тапса тăнă. Кашниех вăя шеллемесĕр, вăхăта пăхмасăр ĕçленĕ. Нумай рабочисемпе работницăсем инкшер-виçшер станокпа ĕçлеççĕ. Ун пеккисем заводра 27 çын. Акă, Анна Серзина, икĕ станокпа ĕçлесе, нормăна 350 процент тултарать. Çулĕĕр Халăх Комиссарĕ ăна «Отличный вагонник» значокпа наградăланă. Анна Гладкова та юлашки вăхăтра пилĕ станокпа ĕçлеме вĕреннĕ.

Заводри инженерсемпе техниксем ĕç меслечĕсене çăмăллатса пырас тĕлĕшпе те нумай çитĕнӳсем тунă. Çĕнĕ çултан вара кăна рационализаторла 100 сĕнӳ панă. Вĕсенчен 46 сĕнĕвĕпе ĕçре усă курраççĕ. Çав сĕнӳсем завода çулталăк хушшинче 288 пин тенкĕ тупăш парраççĕ.

Отечественнăй вăрçă пынă çулсенче заводра нумай çынсем хăйсен тылри тата фронтри паттăр ĕçĕсемпе чапа тухр